Пенси ыйтăвĕсемпе

Ĕç пенсийĕн шайне ӳстерес теместĕр-и?

(Вĕçĕ. Пуçл. иртнĕ номерте).

ПУР КАТЕГОРИСЕМ ВАЛЛИ ТЕ

Гражданин Пенси фончĕн хăй пурăнакан вырăнти территори органне заявлени-пе хăй те пыма пултарать. Заявление почтăпа та ярса пама юрать. Анчах та кун пек чухне заявлени çыраканăн алă пуснине нотариус патĕнче çирĕплетни кирлĕ.

4-мĕш статьян 5-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн Пенси фончĕн территори органĕ заявлени илнĕренпе 10 кунран кая юлмасăр гражданина пенсин пухăнакан пайĕ çине хушма страховани взносĕсем куçмалли программа хăш кунран тытăнса вăя кĕрессине пĕлтерме тивĕç.

ĔÇЛЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ

Страхланă çын тата патшалăх тӳлекен взносăн чи пĕчĕк тата чи пысăк виçи мĕн чухлĕ?

Ĕç пенсийĕн пухăнса пыракан пайĕ çине хушма страховани взносĕ мĕн чухлĕ куçарассине страхланă çын хăй палăртать. Саккунра программăна кĕме кирлĕ чи пĕчĕк виçене кăна палăртнă: вăл çулталăкне 2000 тенкĕрен кая пулмалла мар е уйăхне 167 тенкĕрен. Тепĕр çултан тытăнса вара патшалăх пулăшу шучĕпе укçа куçарса пама тытăнать.

Страхланă çын ĕç паракана заявлени çырса панă чухне пенсин пухăнакан пайĕ çине хушма страховани взносне мĕн чухлĕ куçарассине кăтартма тивĕç. Взнос виçине улăштарас пулсан страхланă çыннăн заявлени çырмалла.

Патшалăх пулăшăвне панă чухне страхланă çыннăн счечĕ çине календарлă çулталăк хушшинче куçнă хушма взнос виçине шута илеççĕ. Анчах та вăл 12 пин тенкĕрен ытла пулмалла мар. Мĕншĕн тесен патшалăх 12 пин тенкĕрен ытла хушса тӳлемест. Калăпăр, ĕçлекен 12 пин тенкĕ тӳленĕ пулсан, патшалăх ăна 12 пин тенкĕ хушса тӳлет, 8 пин тенкĕ тӳленĕ пулсан – 8 пин тенкĕ, 30 пин тенкĕ тӳленĕ пулсан та – 12 пин тенкĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн ĕç паракансен те хăйсен ĕçченĕсен пенсин хушăнса пыракан пайĕ çине хушма взноссем хывма юрать. Ку енĕпе нимĕнле чару та çук. Ĕç паракансемпе ĕçлекенсен взносĕсене патшалăх пулăшăвне палăртнă чухне пĕрле шутламаççĕ. Патшалăх пулăшăвĕ пĕтĕмпех ĕçлекен хăй тӳленĕ взнос виçинчен килет, каларăмăр ĕнтĕ, çулталăкра 12 пин тенкĕрен иртеймест.

ПЕНСИОНЕРСЕМ ТАТА ПЕНСИЕ ТУХМА ХАТĔРЛЕНЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ

Пенсие тухма хатĕрленекен çынсем те, кунпа пĕрлех 1953–1966 çулсенче çуралнă арçынсем тата 1957–1966 çулсенче çуралнă хĕрарăмсем те, 2005 çултан тытăнса обязательнăй пенси страхованийĕн пухăнса пыракан пайĕнчен хăтарнисем, халĕ хăйсен ирĕк пулсан пĕтĕмĕшле условисемпе асăннă программăна хутшăнма пултараççĕ.

Пенси çулне çитнисем валли саккун кăштах улшăнусем тунă. Енчен те пенси çулне çитсен те страхланă çын ĕç пайĕн нихăш пайне те палăртма та пымасть пулсан, патшалăх пулăшăвĕн виçине çыннăн ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ çине çулталăкра куçнă взноссен виçине тăватă хут пысăклатса палăртаççĕ. Анчах та вăл 48 пин тенкĕрен ытларах пулаймасть. Тепĕр майлă каласан, патшалăх ирĕклĕ взноссен кашни тенкишĕн 4 тенкĕ тӳлет, анчах çулталăкра 48 пин тенкĕрен мала мар. Кун пек чухне пенсионерсем валли обязательнăй услови вăл – программăна хутшăннă чухне ĕçлекен пенсионер пенси илмест.

Программа мĕн вăхăта пырать?

Саккунра ăнлантарса панă тăрăх, 5 çул хушшинче (2008 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен) программăна кирек хăçан та хутшăнма пулать. Çапла вара 2009 çулта взноссем тӳлеме тытăнсан тата çулталăкра 2000 тенкĕрен кая мар куçарсан 2010 çултан тытăнса патшалăх пулăшăвне илме пулать. Вăл ĕçлекен çын взноссем тӳлеме тытăннă хыççăнхи çултан тытăнса 10 çул хушши пырать. Саккунпа хушма тӳлевсем тӳлеме пăрахма та, тепĕр хут тӳлеме тытăнма та ирĕк панă.

Енчен те пенсионер вилсе кайрĕ пулсан? Кун пек чухне ирĕклĕ взноссемпе патшалăх пулăшăвĕ кама юлаççĕ?

Йĕрки кунта обязательнăй пенси страхованийĕн пухăнакан пенсийĕ чухнехи пекех. Ирĕклĕ майпа тӳлекен пенси страхованийĕн суммине вилнĕ çыннăн тĕпкĕчĕсене тӳлеççĕ. Ку тӳлевсене тĕпкĕчсене (мăшăрĕ, ашшĕ-амăшĕ тата ачисем) ĕçлекен çын пенсие тухиччен вилсе кайнă пулсан параççĕ. Енчен те вара пенси илме тытăннă пулсан, пухăннă пĕтĕм сумма патшалăх харпăрлăхне куçать.

Кун пирки саккунăн 16-мĕш статйинче ăнлантарса панă.

Калăпăр, пенсионер пенси çулне çитиччен йĕркеллех пурăнчĕ. Ку программăпа килĕшӳллĕн хыççăн унăн мĕн чухлĕ хушма пенси илсе тăма шанăç пур?

Тĕслĕхрен, ĕçлекен çын саккунпа пăхнă 10 çул хушши асăннă программăна хутшăнать тейĕпĕр. Кашни çул пенсин пухăнакан пайĕ çине шăпах 12 пин тенкĕ (е уйăхне 1000 тенкĕ) тӳлесе тăнă. Апла пулсан патшалăх çулталăкне тепĕр 12 пин тенкĕ хушса тӳлет. 10 çул хушшинче пенсионерăн счечĕ çинче 240 пин тенкĕ пухăнать (120 пин тенкĕ хăйĕн тата тепĕр 120 пин тенкĕ патшалăх пулăшăвĕ). Ку вăл «таса» сумма, укçа-тенкĕне ертсе пыракан компанире е пенси фондĕнче инвестициленине шутламасăр. Пенси çумне хушăнакан сумма виçине палăртас тесен пĕтĕмĕшле хушăннă суммăна пенсире пулнин срокĕ çине пайлас пулать. Хальхи вăхăтра вăл 19 çулпа танлашать е 228 уйăхпа. 240 пин тенкĕне 228 уйăх çине пайласан 1052 тенкĕ те 63 пус пулать. Апла пулсан пенсионер çĕре кĕрицченех пенсипе пĕрле çак суммăна илсе пурăнĕ.

Район прокуратуринче

Салтакра пуласси – кашни яшăн тивĕçĕ

Муркаш район сучĕ хăйĕн 2008 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе «С.М. Михайлов ячĕпе хисепленекен Йӳçкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн директорне Владимир Геннадьевич Федорова РФ Уголовнăй кодексĕн 292-мĕш статйипе (служба ултавĕ) тата РФ Уголовнăй кодексĕн 285-мĕш статйипе (служба полномочийĕсемпе тивĕçлĕ мар усă курни) айăпласа 2 çул та 6 уйăх ирĕкрен хăтарма, ку срока условно тесе йышăнчĕ. Тĕрĕслев вăхăтне 2 çул палăртрĕ.

Ĕçĕ вара кунта акă мĕнре. 2007 çулхи август уйăхĕн çурринче «С.М. Михайлов ячĕпе хисепленекен Йӳçкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн директорĕ В.Г. Федоров хăйĕн иккĕмĕш сыпăкри шăллĕ Василий Веннальевич Федоров валли суя справка хатĕрлет. Мĕнле справка пирки сăмах пырать-ха. 2007 çулхи августăн 15-мĕшĕнче çырнă 54-мĕш номерлĕ приказпа килĕшӳллĕн В.В. Федорова Йӳçкасси шкулĕн технологи учителĕ пулма çирĕплетнĕ имĕш. Шкул директорĕ çапла вара шăллĕ валли суя справка хатĕрлесе парать, ун çине алă пусать, шкулăн пичечĕпе штампне лартать.

Мĕн тума кирлĕ пулнă тетĕр-и Василий Веннальевича кун пек суя справка? Çара каяссин вăхăтне каярах куçарма е, тепĕр майлă каласан, отсрочка илме. Çак суя документа вăл 2007 çулхи сентябрь уйăхĕнче Чăваш Республикин Муркашпа Элĕк районĕсен çар комиссариатне илсе пырса парать. Çапла вара çар комиссариачĕн призыв комиссийĕ ăна «Çар тивĕçĕ тата çар служби çинчен» Федераллă Саккунпа килĕшӳллĕн çара каяссинчен отсрочка парать.

Ку ĕçре Василий Веннальевич Федоровăн айăпĕ те çук мар. Ун тĕлĕшпе РФ прокуратури çумĕнчи Чăваш Республики тăрăх Етĕрнери районсем хушшинчи следстви комитечĕ РФ Уголовнăй кодексĕн 328-мĕш статйипе (çар службине каяссинчен пăрăнни) уголовнăй ĕç пуçарас ыйтăва татса парать.

Çапла вара яшсен тĕрлĕ сăлтав шыраса, суя документсем хатĕрлесе, çара кассинчен пăрăнма тăрăшмалла мар. Ку вăл преступлени пулса тăрать. Уншăн тивĕçлипе ответ тыттараççĕ. Çĕршыва сыхласси вара – кашнин таса тивĕçĕ.

Е. ЕГОРОВ,
район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.

Ял уявĕнчен

Пĕрле чухне савăнма аван

Юлашки çулсенче ялсенче ял уявĕсем ирттересси йăлана кĕрсе пырать. Москакасси тăрăхĕнчи Ситуккасси ялĕнче вара кăçалхипе виççĕмĕш хут ирттерчĕç ĕнтĕ.

Хальхи вăхăтра уявсем ирттересси çăмăл ĕçех мар. Анчах Ситуккассисем пĕр çемьери пек туслă пулнипе, ООО «Заря» ертӳçи П.Т. Терентьев укçа-тенкĕ тĕлĕшпе пулăшнипе уяв питĕ савăнăçлă та хаваслă, çӳллĕ шайра иртрĕ. Ку енĕпе хĕрарăмсем маттур пулнине те палăртмалла. Кусем вĕсем ял тăрăхĕн депутачĕ С. Крылова, ял старости Е. Петрова, пултаруллă педагогсем К. Сорокинапа Р. Волкова, ял фельдшерици Р. Яндушкина. Лотерея вылявĕ те пулчĕ. Маларах парнесем туянса хучĕç. Ку парнесене тивĕçлисене парса чысларĕç. Вĕсем шутĕнче чи ватă çынсем – 90 çул урлă каçнисем А.А. Архипов тата И.Ю. Петрова, çак кун çуралнă 2 çулхи Д. Петрова, çак кун ят хунă Е. Сорокина, çак кун мăшăрланнă Надеждăпа Анфир Кондукторовсем т. ыт. те.

Ял уявĕ ăнăçлă ирттĕр тесе Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕнчен пачăшкă та килсе халăхпа пĕрле тархасларĕ.

Тутлă шӳрпепе пăтă çини мĕне тăрать тата! Апат-çимĕç пĕçерес енĕпе конкурс та пулчĕ. Р. Яндушкинапа Р. Андюшкина пĕçернĕ кукăль вара пурне те килĕшрĕ. Вĕсем те парнесемсĕр юлмарĕç. Çавăн пекех уява пуçтарăннисене «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарчĕ, уява илем кӳчĕ.

ООО «Заря» ертӳçине П.Т. Терентьева укçа-тенкĕпе пулăшнăшăн тата уява йĕркелесе ертсе пыракансене халăх валли çакăн пек савăнăç туса панăшăн пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

Г. ГОЛУБЕВА,
хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи,
Ситуккасси ялĕнче пурăнакансем.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнчен

Çĕр налукĕн ставкисене çирĕплетрĕç

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Налук тӳлекенсене – тĕрлĕ ялсенчи уйрăм çынсене налук тӳлес енчен танлаштарас тата ку тĕлĕшĕнчи ларутăрава лайăхлатас тесе ĕнтĕ район администрацийĕ çак ыйтăва депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче пăхса тухма кун йĕркине кĕртрĕ. Хăш-пĕр депутатсем çак сĕннĕ проекта пăхса тухмалла мар, теме те пăхрĕç. Вĕсем хушшинче Москакасси халăхĕ суйланă В.М. Пушкин депутат пулни тата сĕннĕ проекта хирĕç сасăлани нумайăшне тĕлĕнтерчĕ. Ку вăл депутатсен районти Пухăвĕн малтанхи 2007 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчи ларăвĕн йышăнăвне вăйра хăварниех пулĕччĕ. Урăхла каласан, Москакассисен çурт лартма илнĕ çĕр лаптăкĕшĕн кашни харпăрлăх хуçин 3 пин тенке яхăнах тӳлемелле пулатчĕ. Ларура депутатсенчен ытларахăшĕ сасăланипе район администрацийĕ сĕннĕ проекта йышăнса хăварчĕç. Ку йышăну 2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа право хутшăнăвне кĕнисене пырса тивет. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн йышăнăвне район хаçачĕн иртнĕ номерĕнче пичетленĕччĕ. Лайăхрах ăнланма: çурт лартма илнĕ çĕр лаптăкĕсемшĕн 2008 çулшăн налук ставки çĕр кадастрĕн хакĕн 0,3 проценчĕ чухлĕ пулать. Москакассисĕр пуçне. Москакасси валли налук ставки çĕр кадастрĕн хакĕн 0,05 проценчĕ чухлĕ пулать. Çапла вара Москакассинче уйрăм çурт лартма илнĕ çĕршĕн налук халĕ малтан çӳлте асăннă суммăна мар, 499 тенкĕ те 08 пус чухлĕ тӳлемелле пулать. Хăвăрах куратăр, Москакассисем те халĕ çак çĕнĕ йышăнупа килĕшӳллĕн çурт лартма илнĕ çĕр лаптăкĕшĕн илекен налука вăтамран районти ытти ялсенчи çынсем чухлех тӳлеме пуçласçĕ.

Уйрăм çынсенчен пуçтарнă çĕр налукĕпе пурлăхшăн тӳлемелли налука пĕтĕмпех (100 проценчĕпех) ял тăрăхĕсен бюджетне куçарса параççĕ. Çак йышăнупа килĕшӳллĕн ял тăрăхĕсен бюджечĕсен тупăш пайĕ хăпармалла, хушма укçа-тенкĕне вара ял тăрăхĕсенче çул тăвас ĕçе тунă çĕре хушма палăртаççĕ.

Вулакансене пĕлме. 2003 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнчи 131-мĕш номерлĕ «Раççей Федерацийĕнчи вырăнти хăй тытăмлăх организацийĕсен пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен» федераллă саккун 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен Раççейĕпех вăя кĕнине пула РФ Налук Кодексĕн 12 статйипе (12 пункт) килĕшӳллĕн уйрăм çынсенчен çĕршĕн тата пурлăхшăн пуçтаракан налук ставкисене ял тăрăхĕсен Пухăвĕсен ларăвĕнче депутатсем çирĕплетеççĕ. Ку çĕнĕлĕх 2009 çултан пурнăçа кĕрет.

Хамăр инф.

Ĕçре пултаруллисем

Çăкăр тутанма кăмăл пур-и?

Сăн ӳкерчĕкре куракан Любовь Леонидовна Васильевапа Алина Юрьевна Смирнова Отарккăри пекарньăра ăна юсаса çĕнетнĕренпех вăй хураççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне юратса тата тăрăшса тунине таврара пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çăнăх миххисенчен пуçласа кăмакаран вĕри çăкăра кăларса йĕркелесе хуриччен мĕн тĕрлĕ ĕç кăна пурнăçламалла мар пулĕ! Анчах çак икĕ маттур хĕрарăм яланах савăк кăмăлпа ĕçлеççĕ. Çăкăрĕ те çавăнпа тутлăрах пиçет пулĕ. «Ытларах чух сменăра (çĕрлехи вăхăтра) 15-16 кăмака çăкăр пĕçермелле. Кăнтăрлахи сменăра булка-печени пĕçеретпĕр», – теççĕ ăстасем. 10 кăмака (пĕр кăмакана 135 çăкăр кĕрет) çăкăр пĕçерсе кăлармаллине сахал вырăнне хураççĕ вĕсем, халăха чи кирлипе – çăкăрпа тивĕçтерекенсем.

Н. НИКОЛАЕВА.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Çу кунĕсем

«Хĕвел» ăшăтать

Эпир июль уйăхĕнче Чуманкасси шкулĕнче ĕçлекен «Хĕвел» лагере çӳрерĕмĕр. Малтанхи кунсенченех пире кунта питĕ килĕшрĕ. Мĕншĕн тесен эпир кашни кунах «хĕвел пайăркисем» пуçтарма пултаратпăр. Çавăнпа та хамăра лайăх енĕпе çеç кăтартма тăрăшрăмăр. Пире Т.А. Павлова лагерь начальникĕ, В.Э. Федорова тата Н.Ю. Степанова воспитательсем кану вăхăтне те, ĕç вăхăтне те савăк кăмăлпа ирттерме пулăшрĕç. Çумăрлă кунсенче те пире «Хевелте» ăшă пулчĕ.

Лагере çӳренĕ ачасем.

Кĕрлесе тăрать «Кустăрма»

Пирĕн лагерьте кашни ача кăмăла каякан ĕç тупма пултарать. Пăхатăн та тĕлĕнсех каятăн! Акă пĕрисем шашкăлла выляççĕ. Пĕчĕккисем те шахматла выляма пĕлеççĕ тата! Унсăр пуçне хитре ӳкерме пĕлекенсен шучĕ те ӳссех пырать. Арçын ачасем теннисла выляма кăмăлласçĕ. Футбол вăйăине вара хĕр ачасем те тиркемеççĕ. Пĕрре çак вăйă пынă вăхăтра пĕр ачи: «Мĕншĕн вара пирĕн 22 ачан пĕр мечĕк хыççăн чупмалла? Кашнине пĕршер мечĕк панă пулсан...» - терĕ. Тепĕр кунне шкула 4 çĕнĕ мечĕк илсе килчĕç. Станислав Осипович Иванов пулнă иккен ку ырă çын. Тавах сире ырă кăмăлушăн!

Эпир нумаях пулмасть Шупашкара та çитсе килтĕмĕр. Тавах лагерь ертӳçипе пирĕн воспитательсене пурне те.

А. ЕРДУКОВА, «Кустăрма» командирĕ.